Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

106 (7531) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи декабрĕн (раштав) 15-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕнчен**

## Шурчасем фермăра та килти пек ĕçлеççĕ

***Раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче районти выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракансен пĕрлехи кунĕ иртрĕ. Район администрацийĕн ответлă специалисчĕсем, ял хуçалăх пайĕнче ĕçлекенсем, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцийĕнче вăй хуракансем çак кун йăлана кĕнĕ йĕркепе районти кашни ял хуçалăх производство кооперативне, агрофирмăна çитсе курчĕç, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç вырăнсенче епле пынипе паллашрĕç. Кун йĕркинче рынок хутшăнăвĕсенче хуçалăхсен аталанăвне тивĕçлĕ шайра тытса хăварма алă айĕнчи мелсемпе тухăçлăрах усă курасси, çакна валли ĕç тата производство дисциплинине çирĕп тытасси, кашни специалистăн хăйĕн ĕçне критикăлла хак пама вĕренесси пулчĕ.***

**РАЙОНТИ ЛАРУ-ТĂРУ**

Кăçалхи çанталăк йĕпе-сапапа нушалантармарĕ. Кĕрхи ĕççем те вăрăма тăсăлмасăрах пурнăçланчĕç. Кунпа пĕрлех малашлăха пăхакан валли обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе те тухăçлă ĕçлеме условисем çителĕклĕ пулчĕç. Ĕлĕкренпе кĕрхи уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн çĕр ĕçченĕ каннă, кĕр мăнтăрĕпе ĕçкĕ-çикĕ ирттернĕ. Анчах пирĕнтен чылайăшĕн паян савăнма иртерех-ха. Хăшпĕр "специалистсен" "тăрăшулăхĕпех" паян чылай фермăсенче тислĕк ыйтăвĕ çивĕч тăрать, выльăхсем шыв çуккипе аптăрани пите хĕретет, юлашки икĕ тĕслĕхе пула фермăсенчи ĕç дисциплини уксахлать.

*СĔТ.* Кăçалхи 11 уйăхра, пĕлтĕхи çав тапхăртипе танлаштарсан, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче пĕтĕмпе 800 тонна сĕт илсе çитереймерĕмĕр. Пĕр килограмне 10 тенкĕпе шутласан та, çухату 8 миллион тенкĕне хăвалать. Çак каялла çул малалла аталанать. Специалистсем "çук" тенипе лăпланни, хăйсене шаннă ĕç вырăнĕсенче ыйтуллă лару-тăрăва хăйсем татса пама хыпкаланманни, ĕçе йĕркелеме тăрăшманни пире паян тивĕçтерме пултараймастех. Пĕтĕмĕшле лару-тăрăва хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе килти хушма хуçалăхсем пуçарулăх кăтартни кăна юсама пултарчĕ. Тĕрлĕ формăллă хуçалăхсене пĕрле илнипе кăна район иртнĕ çулхинче ытларах сĕт сурĕ: пĕлтĕрхи 30543 тонна вырăнне 33570 тонна (109,9 процент).

*АШ-КАКАЙ.* Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те, ытти харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче те аш-какай туса илесси кăçалхи 11 уйăхра пĕлтĕрхинчен сумлăрах: пĕлтĕрхи 6603 тонна вырăнне Муркашсем кăçал 6942 тонна аш-какай туса илнĕ. Пĕтĕмĕшле çак кăтартусем савăнтараççĕ паллах, анчах çулталăк хушшинче пур выльăх юлашĕ те чакни выльăх пăхакансен те татса паман ыйтусем пуррине калать. Ку çулпах каяссинчен пăрăнмасан...

**12-мĕш çул хуçалăхра ĕне сунă çĕрте ĕçлекен Елена Васильева, Шурчари ветеринари участокĕн ветфельдшерĕ Людмила Пискарева (кунти пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 30 çул), 21 çул дояркăра вăй хуракан Елена Мясникова ĕнесене çĕнĕ технологипе сунипе хавас. "Сĕт кун пек хаклăрах сутăнать пулсан пирĕн ĕç укçи те ӳсет-çке", – терĕç вĕсем ĕç укçине вăхăтра илнине палăртса.**

**"ГЕРОЙ" ХУÇАЛĂХРА**

Хуçалăхри ферма коллективĕсенче пулсан тата вун пĕр уйăх кăтартăвĕсене тишкерсен, вĕсене районти ытти хуçалăхсеннипе танлаштарсан, Шурчасем çĕннине хăвăрт алла илни, производствăна аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăрни, РФ Президенчĕ çул панă "АПКна аталантарасси" наци проекчĕ паракан пулăшусемпе çителĕклĕ усă курни куç умне тухать. Мĕн çинче никĕсленеççĕ-ха вĕсем?

"АПК аталантарасси" приоритетлă наци проектĕнче пăхнă "Выльăх-чĕрлĕх отраслне хăвăрт аталантарасси" пая пурнăçласа кăçал Шурчасем ашкакай, сĕт, сурăх çăмĕ туса илессипе пысăк чикĕсем палăртнă. Каламалла, пурнăçланмалла мар ӳсĕмсем пулман вĕсем. Паллах, ума лартнă тĕллевсем патне утса хăш-пĕр çивĕч ыйтусемпе те тĕл пулма тиврĕ. Вĕсен пĕр пайне татса панă пулсан, кун йĕркинчен тухман ыйтусем те пур-ха.

**(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)**

**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне**

## Инкекрен хамăрăнах сыхланасчĕ

***Чăвашра çапла каларăш пур: "Сыхланакана Турă та сыхлать". Çак сăмахсем пурнăçпа пĕр килнине пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет: нумай инкек пурнăçра хамăр тимсĕрлĕхе пула килсе çапать мар-и? Вут-кăвара пула çын пурнăçĕ татăлнă тĕслĕхсем те юлашки çулсенче час-часах тĕл пулаççĕ. Халĕ акă çĕнĕ çул уявĕсем çитсе килеççĕ. Çавăн пекех ача-пăча пăр çинче ярăнма юратать. Тулли кăмăлпа пуçланнă çĕнĕ кун инкекпе ан вĕçлентĕр тесен мĕн тумалла? Çак ыйтусем тавра калаçрăмăр район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай ертӳçипе Н.П. МИЛЮТИНПА.***

**– Николай Панфилович, шăрăх кунсем хыçа юлчĕç пулин те, пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ хĕлле те çивĕч. Ку енĕпе кăçалхи лару-тăру епле.**

– Тимсĕрлĕх хакла ларнине кашниех ăнланатпăр пулин те, час-час манатпăр ун çинчен. Кăçал пулнă пушарсен шучĕ те çакăн çинченех калать. Паянхи куна районĕпе 52 хутчен алхасрĕ вут-çулăм. Унта пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 9 çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ, пĕр çын сусăрăнчĕ. Иртнĕ çул ку вăхăта пулнă 49 пушарта 12 çын вилнĕччĕ.

Инкек сăлтавĕсенчен ытларахăшĕ электропроводка юсавсăр пулни, вуткăварпа асăрханусăр пулни, электроприборсемпе тимсĕр усă курни, ӳсĕрле пирус туртни тата ытти те. Пĕр сăмахпа каласан, йăлтах тимсĕрлĕхпе пулнă çак инкексем. Çавăнпа та пурнăçра ытларах хамăртан килнине манар мар. Килтен тухса кайнă чух е çĕрле электроприборсене сетьрен кăлармалла пирки манса каяс марччĕ. Çакна валли укçа-тенкĕ те кирлĕ мар вĕт. Кивелсе кайнă юсавсăр электропроводкăна улăштарманни укçана перекетлеме май паманнине те вĕренмелли тĕслĕхсем çителĕклех пулчĕç ĕнтĕ.

Тата çакна та манса каяс марччĕ: çуртсем патне яланах çул уçă пулмалла. Инкек-мĕн пулас пулсан (ун пекки ан пултăрччĕ) пушар машинисене кĕме çул яланах уçă пулмалла. Картишĕнче автостоянка туса хуни хамăрах каялла килсе çапма пултарнине те асра тытмалла.

Кĕçех акă çĕнĕ çул уявĕсем пуçланĕç. Иртнĕ çулхи çак уяв кунĕсем çакна кăтартса пачĕç. Водительсемпе çуран çӳрекенсем çул-йĕр правилисене пăхăнманни, электрооборудованисемпе, электрокăмакасемпе, фейерверк тăвакан пиротехника изделийĕсемпе усă курнă чух асăрханусăр пулни, ӳсĕрле пирус туртни çав вăхăтра пулнă инкексен сĕлтавĕсем пулса тăраççĕ. Тĕслĕхрен, иртнĕ çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи январĕн 8-мĕшĕччен çул çинче пулнă 6 инкекре пĕр çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ, иккĕн аманчĕç, аллисене тăм илнипе пĕр çын больницăна лекрĕ.

Çавăнпа та уяв кунĕсенче инкек-синкекрен сыхланас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çак кунсенче йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, предприятисемпе организацисен, учрежденисен, пур харпăрлăх формиллĕ предприятисен ертӳçисен хăйсен объекчĕсенче пушар тата ытти тĕлĕшĕнчи хăрушсăрлăх мерисене йышăнмалла. Халăхпа ăнлантару ĕçне ирттермелле: килсенче, экономика объекчĕсенче инкек-синкек ан пултăр. Халăх массăллă пулакан вырăнсенче, çавăн пекех ялсенче каçсерен граждансен черетпе дежурство йĕркелемелле. Госпожнадзор ĕçченĕсем уяв мероприятийĕсем иртекен вырăнсенче пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăннипе пăхăнманнине тĕрĕслĕç. Кĕскен каласан, уява пăсмалли пĕр тĕслĕх те ан пултăр тесе туса ирттермелли ĕçсем çаксем. Е тата вырăнсенчи пушар машинисем юсавлă-и? Çунтармалли-сĕрмелли материалсем çителĕклĕ-и? Çĕнĕ çул уявĕсем пуçланиччен чылай маларахах татса памалла çак ыйтусене.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Мартăн 2-мĕшĕнче – РФ Президенчĕн суйлавĕ**

## Д.Медведев В.Путина премьер пулма чĕнет

Пĕрремĕш вице-премьер Дмитрий Медведев хăй 2008 çулхи пуш уйăхĕнчи Президент суйлавĕнче çĕнтерес пулсан Владимир Путинран Раççей Правительствине ертсе пымашкăн килĕшме ыйтнă. Ку çĕршыв халĕ тытса пыракан çул-йĕре малашне те упраса хăварма кирлĕ. Çакăн çинчен Медведев "Раççей" телеканал эфирĕнче пĕлтернĕ.

"Раççей Президенчĕн должноçне суйланмашкăн хатĕррине пĕлтернĕ май унран (Путинран) пирĕн çĕршывăн çĕнĕ Президетне суйланă хыççăн Раççей Правительствине ертсе пымашкăн принцип тĕлĕшĕнчен килĕшме ыйтатăп", – тенĕ Медведев тӳрĕ телеэфирта.

"Çакăн пек йышăнупа кăна саккун кăларакан тата ĕç тăвакан влаçсем ăнăçлă ĕçлейĕç", – палăртнă Медведев.

"Единая Россия" партин суйлав умĕнхи съездĕнче хăйне 2008 çулта Правительство пуçлăхне ларма сĕнни пирки каланă май Путин икĕ услови пурнăçлансан çапла пулма пултарасси пирки пĕлтернĕччĕ. Пĕрремĕшĕ – "Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн" парламент суйлавĕнчи çĕнтерĕвĕ, иккĕмĕшĕ – "çĕршыв Президентне йĕркеллĕ, ăнăçлă ĕçлеме пултаракан çынна суйламалла". Çавăн чухне Путин хăй çакăн пек çынпа мăшăр пулса ĕçлеме пултарасси пирки каланăччĕ.

**Саламлă телеграмма**

## «Район çыннисене тав тăватăп»

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ячĕпе П.В. Семеновран правительство телеграмми килнĕ.

"Хисеплĕ Юрий Александрович!

Мĕн пур кăмăлтан Сире тата Сирĕн ятпа районта пурăнакан çынсене Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавне хутшăннăшăн тата "Единая Россия" партишĕн активлă сасăланăшăн тав тăватăп. Малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени района, республикăна ăнăçлă тата вăйлăн аталанма май парасса шанса тăратăп.

Ентешсене пурне те çирĕп сывлăх, телей, килĕшӳ тата ырлăх сунатăп. Сирĕн килсенче тулăх пурнăç, лăпкăлăх тата канăçлăх хуçалантăр", – çапла çырать П.В. Семенов.

**Ырă хыпар**

## Районта 400-мĕш ача çуралчĕ

Кăçалхи декабрĕн 4-мĕшĕ ЗАГС ĕçченĕсемшĕн паллă кун шутланчĕ. Çак кун кунта 400-мĕш ача çурални çинчен акт çырчĕç. Кун пекки 1998 çултанпа пулман. 9 çул хушшинче районта çулталăкра 400 ача таран çуралман.

Вомпăкассинчи Оксана Ивановнапа Игорь Игоревич Матвеевсем пĕрремĕш ачине Максим ят хучĕç. Латынь чĕлхинчен куçарсан «чи пысăкки, хăватли» тени пулать. Апла пулсан ăна вăрăм та аслă пурнăç çулĕ кĕтет.

Эпир вара Максима та, унăн ашшĕ-амăшне те çирĕп сывлăхпа телей сунатпăр.

**Н. ГРИГОРЬЕВА.**

**Камăн сăвăм пысăкрах?**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ РАШТАВ УЙĂХĔН 13-МĔШĔНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН СĔТ МĔН ЧУХЛĔ СУСА ИЛНИНЕ КĂТАРТНИ (КИЛОГРАМПА)**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Кашни ĕне пуçне ĕнер сĕт сунă. 2. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ("–" - сахалрах).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 5,9 | -0,1 |
| "Волга" | 5,0 | -5,4 |
| "Восток" | 12,1 | 2,1 |
| "Герой" | 8,5 | -1,0 |
| К. Иванов яч. хис. | 3,5 | -0,5 |
| Ильич яч. хис. | 10,6 | 1,4 |
| Ленин яч. хис. | 6,0 | -1,5 |
| "Лидер" | 10,0 | 1,1 |
| "Оринино" | 9,4 | -3,8 |
| "Передовик" | 4,7 | -0,8 |
| "Свобода" | 9,6 | -1,3 |
| "Сеятель" | 6,0 | 0,4 |
| Суворов яч. хис. | 10,4 | 0,0 |
| "Рассвет" | 3,0 | -0,3 |
| "Ударник" | 10,4 | -0,1 |
| Чапаев яч. хис. | 1,7 | -3,0 |
| "Чемеево" | 2,1 | -4,7 |
| Чкалов яч. хис. | 10,0 | -1,3 |
| "Хлебороб" | 3,8 | -0,3 |
| **Районĕпе** | **7,9** | **-0,6** |

## Шутлă кунсем юлчĕç
## Район хаçатне малалла çырăнтараççĕ

**Хаклă вулаканăм! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**